С(Чув)
А 36
19900-чув

Юрий Айдаш



# Сăнсем

4-019900

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

А 36

Юрий Айдаш

# Сăнсем

Сăвăсем. поэма



БИБЛИОТЕКА
Союза писателей
Чуваш. АССР
Инв. № 7215

Чăваш кĕнеке издательстви
Шупашкар — 1976

С (Чув) 2
А 36

ПРОВЕРЕНО
20 ю

19900-чув.

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

А $\frac{0743-05}{М 136 (03)-76}$ 59—76

© Чувашское книжное издательство, 1976 г.



# ТЫМАР

## РЕВОЛЮЦИ МУЗЕЙĔ

Истори пергаменчĕ ҫирĕп —
Мĕн ҫырнă, пурне те чăтать.
Ҫапах Вавилон е Ассири
Уҫ сывлăш та ҫутă ыйтать.

Вара сĕмлĕхрен хăпараҫҫĕ
Сăнни те сули, суланчи,
Турри, мăчаварĕ те тарҫă —
Ҫӳлти те ҫӳлти айĕнчи.

Мĕн калăн, пуян ҫак коллекци.
Ун сумĕ те хакĕ ҫинчен
Итлетпĕр те вĕҫĕмсĕр лекци,
Куратпăр кино — хыҫĕнчен.

Ҫӳҫенчĕк залран тухнăҫемĕн
Сисместпĕр ҫапах каҫ енне
Музейĕн халатлă этемĕ
Турра ҫĕтĕкпе шăлнине.

Ҫапла, ку пуриншĕн те паллă.
Вăранмĕҫ вĕсем ыйхăран.
Йăлт пĕтнĕ вĕсем, йăлт ҫухалнă.
Ак халь, эпилог пек, ҫак храм.

...Куҫа ыттисем курăнаҫҫĕ —
Хăмач ялавпа тухнисем.
Сӳнми ĕмĕт евĕр ҫунаҫҫĕ
Паян та вĕсен чунĕсем.

Паян та эпир такăрлатпăр
Вĕсем уҫса панă ҫула.
Паян та хăюллăн утатпăр
Вĕсем хыҫҫăнах малалла.

Пулмасть нихăçан та, нимле те
Вĕсем пирĕнтен юласси.
Çул умĕн янрать, ав, илтетĕп,
Вĕсен йыхăравлă сасси.

Вуншар та çĕршер ĕмĕр иртtĕр
Асамлă тĕнче анинче.
Çаплах вăхăт сĕмлĕхĕ витĕр
Вĕсем курса тăрĕç инçе.

Чакмасть революци мухтавĕ,
Вăл — кантăк айне шăнăçмасть.
Вăл — пурнăç. Ун вилĕмсĕр шавĕ
Самантлăх та канăç ыйтмасть.

## СӲНМЕН ТĔТĔМ ÇИНЧЕН

Инкекре килйыш пĕтсессĕн,
Тĕтĕм сӳннĕ тенине
Халăхра хăш чух илтсессĕн,
Асилетĕп иртнине...

Ун чухне пыратчĕ вăрçă,
Аслă тĕрĕслĕх вăрçи.
Пурнăçа ытла та пăрчĕ
Ун алли те ун хĕççи.

Вăйпитти арçын юлманччĕ.
Пирĕн пӳрт те пуш-пушах,
Картишре вĕрместчĕ анчăк,
Ни путек çук, ни кушак.

Кушака-и çитермелĕх?—
Пĕр тĕпренчĕк çăкăра
Те самантлăх, те эрнелĕх
Эп хыпаттăм çăвара.

Кунсерен анне ĕçреччĕ,
Макăратчĕ каçсерен.
Чунĕпе кӳтсе çӳретчĕ
Пирĕн тĕтĕм сӳнесрен.

Пулнă, пулнă-çке сăлтавĕ:
Пĕтнĕ манăн та атте.
Хĕрĕх иккĕмĕш çулта вăл
Ӳкнĕ юнлă уй-хирте.

Ал-ура хытатчĕ пăр пек.
Çыншăн сивĕ — ырлăх мар.

Çук килте пĕр пĕрчĕ шăрпăк,
Кӳршĕ çеç парать кăвар.

Çав кăвар çĕршыв ăшшийĕн
Ялкăшсан кăмакара,
Сарăлатчĕ ялăм çийĕн
Пирĕн тĕтĕм те çăра.

Вăл сӳнсе сапаланмарĕ —
Халăхпа та çĕршывпа
Пулнă ун пĕр вăй тымарĕ,
Пулнă ун пĕр пек шăпа.

Халь ак эп те ача ашшĕ,
Ман алра арçын ача.
Ĕнтĕ çук та ун аслашшĕ —
Пур вăл ăшăтнă вучах.

Çавăнпа эп ĕненетĕп:
Çĕршывпа эпир пĕр чух
Нихăçан та, ĕмĕрне те
Пирĕн тĕтĕм сӳнес çук.

## МАНĂÇМИ АЧАЛĂХ

Асран тухмасть çав тар шăршиллĕ тапхăр...
Салтак вăйĭи ирттернĕ сăртсенче
Юр кайнă чух эпир хуллен утатпăр,
Шыратпăр пуля тăмлă çĕр çинче.

Кунсеренех тупатпăр çиччĕ-саккăр.
Киле çитсен, илетпĕр те курка
Кăвар çине лартатпăр шăкăр-шакăр,
Кĕçех юхса тухать шĕв йăлтăркка.

Юмахсенче çĕр шапинчен те, теççĕ,
Черченкĕ сарпике пулса тăрать —
Ав, мĕнлерех сив вилĕм кучченеçĕ
Ача куçне шартса йăмăхтарать!

Кайран хытса тĕксĕмленет шăранчăк.
Шăл тĕрĕслет ун хытăш-çемçĕшне...
Анчах, çыртса пăхсан та, ăнкарман çав
Эпир тăхланăн наркăмăш тĕшне.

Кунсем вĕçеççĕ. Малалла пыруçăн
Халь хыçрине сăнатпăр та вăрах
Пулни-иртни те курăнать яр-уççăн,
Чĕре ыратăвĕ те ытларах.

Чĕр тамăка тӳссе ирттерчĕ халăх.
Ĕçлетпĕр пурте пурăнас тесе.
Çапах та пирĕн манăçми ачалăх
Çӳрет сăртсем çинче, пуçне пĕксе.

1946

Шăппăн шăвать каç чаршавĕ,
Çăлтăр вылять чӳхенсе.
Сӳннĕ йăлтах кун шăв-шавĕ,
Çĕр çеç пĕтмен сивĕнсе.

Тĕксĕм капламăн йăмралăх...
Йытă вĕрет сайраран...
Ыйхăллă, ырнă тавралăх
Ассăн сывларĕ аран.

Ах... тем шуралчĕ пек, акă,—
Пĕр йĕркерен тутăрсем...
Ташă калать балалайка.
Сассăр йĕреççĕ хĕрсем.

Ун чух асаплӑ вӑрҫӑччӗ,
Вут хыпнӑччӗ Ҫӗре.
Ылхан пек, хирӗҫ вӑрӑнчӗ
Ачасене, пире.

Сӑпка юрри юрлатчӗҫӗ
Ҫап-ҫамрӑк аннесем,
Куҫӗсене шӑлатчӗҫӗ
Юрланӑ чух хӑйсем.

Ӑҫтаччӗ-ши хаваслӑхӗ —
Кулни те савӑнни?
Ӑҫтаччӗ-ши пуласлӑхӗ —
Ӗмӗрлӗхе савни?

Ҫук ҫав. Эпир ӳсеттӗмӗр —
«Атте» тесе курман.
Пире валли тивлетӗмӗр
Чи телейли пулман.

Пиллӗксенче те пулнӑ-ха?—
Урамсенче каҫ-ир
«Вставай, страна огромная...»—
Юрлаттӑмӑр эпир.

Ҫак юрӑ пирӗн ӑрӑвӑн
Пиелӗх кипкилле,
Вӑй-хал кӳрен ыр ӑрӑмӑн
Кӗнех кашни киле.

Чун уйăрать темле чикке,
Темле сасса тăнлать хăлхам та...
Çĕршыв вăл çак сăртсем иккен,
Çак хĕрессем, çынсем, эп хам та.

Эй, тĕлĕнтермĕш çыхăну,
Кунçулсемпе çулсен тĕввийĕ;
Çурхи тӳпен кăвак сиввийĕ —
Сан çутă, вилĕмсĕр сăну.

## ВĂРНАР ЧИЙИСЕМ

Çитрĕ вăхăт —
каллех ак Вăрнар чийисем,
шуррăн кăпăкланса,
урамсем тăрăх шурĕç.
Пит-куçа перĕнсе,
кăтăкларĕç чуна та вĕсем,
тахçанхи сăнсене,
кинори пек,
яр-уçăмлă турĕç.

Çук,
кунта каçсерен эп хĕрпе çӳремен.
Халь те маншăн кунта
пăшăрханмĕ пĕр чун та.
Пурпĕрех
çак хăма тротуар инçетрен
йыхăрать хăй патне —
Акăш çулĕ пек çутă.

Утăмлатăп ун тăрăх —
çăп-çăмăл ура.
Шăп вокзал патĕнче
вĕçленет вăрăм çул ман.
Сарă çурт.
Шурă кăпăк вылять ун тавра.
Симĕс поезд иртет
шурă кăпăкпа çумăн.

Кинолента пекех,
Симĕс поезд иртет.
Курăмсем
васкасах пĕр-пĕрне хăвалаççĕ.
Ав,
хĕрарăм куççулĕ

салтакăн питне йĕпетет,
Ав,
салтак аллисем
пепкине ыталаççĕ.

Эп — çав пĕчĕк пепке.
Урăх поезд патне
тепĕр вунă çултан
урăхла эп тухаттăм.
Чĕресе çăмарта
е сар çу кăшт хурать те анне —
вăтанса-хĕрелсех
станцăна, пасара, çул тытаттăм...

Ал пымарĕ-ши,
ăс-ши çитмерĕ —
сутма
паян кун та пĕлместĕп,
анчах та туятăп:
поездсен янăравĕ,
ун чух вырнаçса чунăма,
ĕмĕте хускатать,
инçене илĕртет, ак, паян та.

Эп кунтан тухса кайнă
чи аслă çула.
Транзитсен ырлăхне
Вăрнарта эп пуçланă туймашкăн.
Салтака, вĕренме...
Çурçĕре, Урала...
Эп пуçланă кунтан
Çĕршывпа паллашмашкăн.

Çитрĕ вăхăт —
каллех ак Вăрнар чийисем,
шуррăн кăпăкланса,

урамсем тӑрӑх шурӗҫ,
пит-куҫа перӗнсе,
кӑтӑкларӗҫ чуна та вӗсем,
тахҫанхи сӑнсене,
кинори пек,
яр-уҫӑмлӑ турӗҫ.

2. Сӑнсем.

19900-чхв.
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

## ТИРЕКСЕМ

**Баллада**

Вĕсем Мăн урамра ÿсеççĕ
Шăпах икшерĕн юнашар.
Лартса хăвараканĕ, теççĕ,
Пĕр вырăс пулнă, комиссар.

Суя-и, тĕрĕс-и — пĕлместĕп,
Калам мĕн илтнине çапах.
Ĕненмене ĕнентерместĕп,
Ĕненекеншĕн çак сăмах.

...Тахçан яла отряд-мĕн килнĕ —
Сăран тужуркăллă çич яш:
Тутар, виç вырăс, украинец,
Чехпа ку тăрăхри чăваш.

Арман хуçин алтса пытарнă,
Çĕртсе вырттарнă тыррине
Отряд вулăсалла турттарнă
Кăвак çутлах пĕр ирхине.

Хуллен ват юмансем кашланă
Вăрманлă çул ик айккипе.
Хуллен çич яш пĕрле юрланă
Пăлханнă кăмăл еккипе.

Анчах та кăмăлланă юрă
Пат татăлнă çур çавраран —
Кулак эшкерĕ, йытă мурĕ,
Юрра тĕлленĕ-мĕн хыçран.

Хаш! хашлатса хурланнă уртăш,
Янранă сывлăш та, кÿтсе.

Текех юрлаймӗҫ ӗнтӗ ултташ
«Ан вӗҫ, ан вӗҫ, ҫахан...» тесе.

Пӗрин кӑна-мӗн куҫӗ уҫӑ,
Ӳпки сывлать пӗрин кӑна.
Пӗри кӑна, Рязанцев Уҫӑп,
Каллех курать ҫап-ҫут куна.

Хлороформпа, тарпа ҫӗр талӑк
Пӗвер таран касӑлнӑскер,
Кӑшт сывалсан, ем-ешӗл палӑк
Килсе-мӗн лартнӑ ҫакӑскер.

Ҫӗкленнӗ улт тирек, улт тантӑш,
Пӗр отделени пек, пӑхсан.
Сыхланӑ вӗсене малтан кӑшт
Усал тӑшман хур тӑвасран.

Хӗвел шевлин те ҫӗр сӗткенӗн
Чи тараватлӑ сӑйӗпе
Вӗсем ҫӳлтен ҫӳле ҫӗкленнӗ,
Мухтаннӑ евӗр вӑйӗпе.

Анчах та анӑҫ хуралсассӑн,
Хӗреслӗ ҫиҫӗм ялтлатсан,
Тӑван ҫӗршывӑмӑрӑн Аслӑ
Вӑрҫи хаяррӑн тапрансан,

Тӑшман татах тепре вӗлернӗн
Продотрядри леш ултташне,
Мӑнтарӑн тирексем пӗрерӗн
Хаплатнӑ шурӑ юр ҫине.

Ылханлӑ вӑрҫӑ — ним калаймӑн:
Салтак шӑпиллӗ тирексен

Ачасене сыхламалла-мĕн
Шартламасем витересрен.

Вара, фашист дотне хупланăн
Кĕлеткепе, вĕри пуçпа,
Вĕсем кăмакара шăраннă
Раштав сиввисенче каçпа.

Шăпланнă аслати кĕрлевĕ...
Мухтавлă Çĕнтерӳ кунне
Ял халăхĕн хавас сĕрлевĕ
Тĕлĕнтермен пуль нихăшне.

Тĕлĕнмелли те пулнă имĕш —
Мăн урамри улт тункатан
Хунавĕ çӳллĕ те сип-симĕс
Çав кун хăпарнă тымартан.

Апла-и, çук-и — тавлашмалăх
Сăлтавĕ выраннă та мар:
Лараççĕ тирексем — улт палăк —
Çаплах икшерĕн юнашар.

## ÇĔРМĔШ ЧЕЧЕК

**Баллада**

Тен, эп пĕрремĕш мар — çĕр те пĕрремĕш
сăвăç
Çав çыннăн пурнăçне юрра хывнисенчен,
Шанатăп пурпĕрех: татах нумай чыс тăвĕç,
Татах та юрăсем шăранĕç ун çинчен.

Вăл пулнă çĕр çынни. Латыш. Шыв-шурлăх
тăрăх,
Хура вăрмансенче, сăртра та айлăмра
Шыранă вăл чечек. Ни çумăрсем, ни шăрăх
Çĕртме пултарайман шыраслăха унра.

Мĕн-ма тесен шăпа ăна хăех пилленĕ
Çĕрсе пĕтеслĕхе чарас ăсталăха...
Ак халь ун чĕрине автоматсем тĕлленĕ,
Ак халь ун куçĕнчен сив вилĕм хăй пăхать.

Хуллен утать çав çын. Темле усал асамлăх
Тухатнăн туйăнать ал-урана, ăса.
Вăл, тыткăнри этем, чечек шырать бальзамлăх,
Ют çĕр инçĕшĕнчен тăван çĕрне курса.

Эй, манăçми çĕршыв! Унта халь тĕтĕм-хăрăм,
Унта хура танксем таптаççĕ курăка.
Унта хура кунсем, масар çинчи пек, вăрăм,
Унта халь чĕреллех чикеççĕ шăтăка.

Кунта та ырлăх мар. Тăван тăпра сĕткенĕ
Черченкĕ чечеке вăй памасан куллен,
Ӳкет чечек тени, тăшман персе ӳкернĕн,
Шанса-хăрса пырса пĕр вĕçĕмсĕр, хуллен.

Тен, вăл та кĕç ӳкет? Тĕнче кăшкар пек тăвăр...
Çаплах усрать фашист киревсĕр шухăшне.
Тупма пултарчĕ çын шăп тăхăрвунă тăххăр,
Анчах та тупаймасть вăл чи юлашкине.

— Туп çĕрмĕш курăка! Часрах, ылханлă йытă!
Шыра, йӳтенĕскер!— хăр сасă илтĕнет.
Пăхмасть çын сас енне, калать сасартăк хыттăн:
— Çуралнă çĕр çинче кăна вăл çитĕнет!

Янрарĕ залп кĕскен. Çын тĕшĕрĕлчĕ анчĕ.
Юн сирпĕнчĕкĕсем хĕмленчĕç, çиçрĕç тек,
Пĕрре шĕл-кăварла йăл йăлкăшса вылянчĕç,
Тепре çав юлашки, чи кирлĕ чечек пек.

## ПИРЁН ĂРУ ЮРРИ

Каçкӳлĕм, анăç ылтăн тĕс илсессĕн,
Тинкернĕçемĕн çутă пĕлĕте
Сасартăк туйăнать килсе кĕрессĕн,
Хапха уçса, тăван киле атте.
Тапать чĕрем, сикет чĕрем хĕрӳллĕн,
Пăлхавлă юн шăнать тымарсенче.
Ах, сывлама та йывăр-мĕн çак çӳллĕ,
Çак çӳллĕ, чĕмсĕр пĕлĕт айĕнче.

Анчах çемçе çунатлă вăштăр çилĕ
Тĕнче тĕсне вĕрсе арпаштарать.
Вара çут пĕлĕт яштака пӳ-силлĕ
Маттур салтак — атте пулса тăрать.
Калать, калать хуллен-хуллен мана вăл
Тăван çĕрсен манми хуйхи çинчен.
Кĕлленнĕ ял, юнпа пĕвеннĕ Атăл
Куратăп эп ун хурлă куçĕнче.

Аса илет атте çынсем мĕн чухлĕ
Пулас телейшĕн çуннине вутра.
Çапла сыхланнă халăхсен кунçулĕ,
Ман хамăн та кунçулăм çав шутра.
Мана та йӳçĕ тĕтĕм чыхăнтарнă,
Хутлатнă выçлăх, шăнтнă сивĕсем.
Мана та манăн ăрăва хăтарнă
Мухтавлă, хĕрлĕ çăлтăрлă çынсем.

...Каçкӳлĕм, анăç ылтăн тĕс илсессĕн,
Тинкернĕçемĕн çутă пĕлĕте
Сасартăк туйăнать килсе кĕрессĕн,
Хапха уçса, тăван киле атте.
Çук-çук, килмест, килмест салтак, ĕненĕр:
Фронтрах вăл халь те автомачĕпе.
Куç умĕнче — вăл ĕмĕрлĕх пилленĕ
Янравлă пурнăçпа таса тӳпе.

Тăпран эп пулнă, йывăçăн,
Эп ишнĕ çутăра.
Эппин, ӳксен те, ывăçăн
Пăрахăр чĕр тăпра.
Лартса хăварăр хурăн-и...
Йăмра, тен, хӳхĕмрех.
Сире, пăхсассăн, курăнĕ,
мана тесен — пĕрех.
Ем-ешĕл тум вăл тăхăнтăр
Çурхи хаваслă кун.
Сап-сарă çулçă тăкăнтăр,
Черет çитсессĕн, ун.
Ăна тĕнче пĕркенчĕкĕ —
Сенкер-кăвак тӳпе
Тĕпренчĕкĕн-тĕпренчĕкĕн
Сăйлатăр çутипе.
Эп тунсăхламăп йывăррăн,
Хускатмĕ ним аса.
Эп канлĕн-канлĕн çывăрăп,
Тĕнче тĕсне манса.
Тӳлемĕп тин пуç шухăшăн,
Такамшăн пулмăп шӳт,—
Мĕскершĕн çуннă шухăшăм,
Çавна ăнланнă ӳт.
Янратăр сыввăн пурăнăç,
Вăл мансăр та аван.
Татах çуралĕç, пурăнĕç...
Начар-и çак, тăван.



# ВĔРИ ТИНĔСРЕ

Пуласчĕ ман вăйлă та çӳллĕ
Ӳтпе те ăспа, чĕрепе.
Утасчĕ пĕр тăрă иркӳлĕм
Тӳлек сĕм вăрман хĕррипе.

Тухасчĕ шур кăпăклă, шавлă
Хумсем кĕрлекен çырана —
Шур парăслă, хĕрлĕ ялавлă
Карап курăнинччĕ мана.

Ун ырă-çиллес капитанĕ
Чĕнинччĕ часрах хăй патне —
Туйинччĕ вăл манăн ытамăн
Сая каяс пур хăватне.

Чи шанчăклă, çирĕп çынсемшĕн
Тус пулăттăм эп те ун чух,
Çут çăлтăрсăр сӳннĕ кунсемшĕн
Куççулĕ кăлармăттăм, çук.

Вара хăть алхастăр çанталăк,
Тӳнтертĕр хăть тăххăрмĕш хум...
Хамах эп хам тивĕçшĕн — палăк,
Хам хурлăхшăн — тивĕçлĕ сум.

...Чăнах, ачалла çак юнтармăш.
Эп халь те вĕри тинĕсре.
Темскер шырасси — йăлăхтармăш
Чир евĕр кăна чĕрере.

Мĕскер çак иллюзиллĕ сцена?
Кунçул тарĕпе вăл çунман!
Вăл хăй те — пыл саслă сирена,
Анчах чун хăлхаллă-çке ман.

Калăр: ку, тейĕр, мода...
Кун йĕркинче пĕр ыйту —
Сан хавасу, Дон-Кихотăм,
Сан чĕрӳнти ырату.

Вĕчĕрхенӳ чирĕ çук ман,
Çук кӳренӳ, ăмсану.
Пурпĕр манпа çума-çумăн,
Рыцарь, сан хурлă сăну.

Эс мĕскĕне хĕрхенетĕн,
Эс паттăрпа пĕртăван.
Эс ырăпа çĕнтеретĕн,
Тĕрĕслĕхе çеç саван.

...Хаклă такамшăн ирони,
Сĕм кĕтесри шăлйĕрен.
Манăн романăн геройĕ
Çул такăрлать тӳрĕрен.

Пултăр ун хӳтлĕхĕ тутăх,
Пултăр ун хуçăк сăнни —
Унăн хавалĕ çап-çутă,
Вилĕмсĕр вăл мĕн сунни.

Халĕ те йышлă-ха ирсĕр,
Халĕ те йĕксĕк тăллать.
Халĕ те, авă, ман рыцарь
Çапăçăва ăнтăлать.

## АВГУСТ

Август — хĕмсĕр, август — сулчă,
Август — тĕлĕкри ачалăх.
Татăлчĕ çӳçенчĕк çулçă,
Тайăлчĕ хăяккăн, чалăш...

Август — тӳпере шур уйăх,
Кĕл-пике пек, юратусăр.
Август — ут сассиллĕ улăх,
Карăшсăр, чун савнă туссăр...

Август — куç тулли тавралăх
Ирĕк, канăçлă, хевтеллĕ.
Ир те каç хирсем ялтравлă,
Ир те каç васан тĕтреллĕ...

Август лăпкă. Эп çапах та
Пурăнăç сăннех куратăп,
Ун çине анчах пăхатăп,
Ун сипне анчах упратăп.

Вара, чиксĕр çĕрĕн-шывăн
Ватăлми чунне тĕл пулнăн,
Эп те, ун пек, чĕрĕ, сывă,
Эп те вилĕмсĕр, яш чунлă.

Ĕçĕмре те, ĕмĕтре те
Тусшăн, кӳршĕшĕн, ют çыншăн
Кĕрешетĕп, çĕнтеретĕп —
Паян куншăн, пуласшишĕн...

Август — хĕмсĕр, август — сулчă...
Тем пăч сӳнчĕ, тем çуталчĕ...
Тем «сыв пул» тесе ал сулчĕ,
Тем «салам» тесе çуралчĕ.

Ишетчĕ ман карапăм çăмăл,
Хăватчĕ симĕс хумсене —
Сасартăк килсе çапрĕ тăвăл,
Тӳнтерчĕ мачта юпине.

Хавхалануллă, çамрăк Ника
Лăш усрĕ çунатне вара...
Ак вăл — шăпа кăтартнă чикĕ,
Кунтан та аялта — тăпра.
Анчах тăхта, тăшман, кулмашкăн,
Тăнран кайман-ха эп, пĕтмен.
Хĕвел çути вылять-ха маншăн,
Пур пулăшу та — çур кĕсмен.
Хамах-и ишсе тухăп эпĕ,
Дельфин-и çăлĕ тăванла?—
Пĕлместĕп, çылăхсен хисепĕ
Сахалтарах-ха пулмалла.
Трагедипе комеди хакĕ
Ман пурнăç хакĕ пулнăран
Йĕретĕп те кулатăп çакă
Чуна астармăш пьесăра.
Анчах та пьесăн пур-çке вĕçĕ,
Халех-и хупăнĕ чаршав?..
Çук, тусăмсем! Пĕтмен-ха ĕçĕм.
Эппин, пăчлантăр ку шăв-шав.
Ан тив, кунçул тӳри майлатăр
Спектаклĕн пиллĕкмĕш пайне —
Унччен тепре карап хайлар та
Тепре виçер-ха хум вăйне!

Пулаймăп тек вунçиччĕре,
Ĕмĕтленни те ачалла.
Куккук та ешĕл ĕшнере
Кĕскетрĕ кунăмпа çула.

Çурхи уяв мыскарисем
Янраççĕ, ахрăм пек, манра,
Анчах эп мар, урăххисем
Халь çав çап-çутă уявра.

Ан тив, ташлаччăр, кулччăр-и.
Кайри—мала, малти—кая...
Вылятчăрах вунçиччĕри
Пурне те çĕнекен вăя.

Ăнлантăр ашшĕ ывăлне —
Хăй йĕркипе пырсан черет,
Телейлĕ вăйă вырăнне
Ĕççи сехечĕ ĕлкĕрет.

Ахаль-и тулашри шава
Уйăрарах итлет хăлхам,—
Кĕртетĕп çирĕплĕх сăвва,
Сăнатăп хытă хама хам.

Илĕртекен тĕнче çине
Пăхатăп кăшт куçа хĕссе,
Чĕрен пĕр тикĕс таппине
Пит ан пăлхаттăрччĕ тесе.

Анчах хăш чух ăнман чĕре
Мĕн юрамасть, çавна ыйтать,
Куккук та ешĕл ĕшнере
Ытла ытарлăн авăтать.

## ЛАША ВĂЙĚ

Юрăсем сахал хывман-тăр
Тĕнчере лаша çинчен.
Кам-ха мантăр, кам-ха мантăр
Вĕсене хăй виличчен?

Вăл илемлĕ те кĕрнеклĕ,
Çĕмĕрен пек ыткăнать.
Тус пек шанчăклă, тĕреклĕ,
Каламасăр ăнланать.

Миçе хут хĕн-хур хăмсарнă
Теветкеллĕ самантра
Вилĕмрен çăлса хăварнă
Вăл аманнă паттăра?

Халăхпа пĕрлех вăл утнă —
Чĕмсĕр, вăйлă янавар.
Вăл унпа шывра та путнă,
Вăл вутра та çунман мар...

Вĕл вĕçен кăтра çилхеллĕ
Е çӳрен, е хура тур —
Гражданин ятне илтмелĕх
Унăн, чăн та, тивĕç пур.

Пĕр ăна сума сусах-тăр
Тупнă пулĕ сăмахне —
Илтнĕ эп, курсассăн трактор,
«Лаша вăйĕ» тенине.

Халь ак шурă Шупашкарăм,
Аната чупса анса,
Çĕн завод çĕклет патваррăн,
Çав вăях пуль ăмсанса.

Сахал мар урхалăх салтнă,
Чӳлĕк çыхнă алăсем
Халь хирте траншея алтнă,
Лартнă кирлĕ паллăсем.

Тĕлĕкре е кинора çеç
Курнисем те лашана
Никĕсе бетон хураççĕ,
Хăпартаççĕ чул стена.

Халиччен йĕвен тытмасăр
Ӳснисем тепрер çултан
Хурçă ут çине те харсăр
Сикĕç-ларĕç чи малтан.

...Инçете пăхмашкăн хăйăр
Ĕненӳллĕ хаваспа:
Тĕрлĕ тĕслĕ çичçĕр ăйăр
Кĕçенмест-и пĕр саспа?

Кĕçенет, чĕвен тăрать те...
Унăн тимĕр йĕвенне
Пĕр маттур тытса пăрать, ав,
Леш енне те ку енне.

Çук хушки çак хура турăн,
Çилхи витĕр çил вĕрмест —
Ывăнми хăвачĕ пур ун,
Чыслă ĕçĕ те пĕтмест.

## АПРЕЛЬ ПУҪЛАМӐШӖ. ИР

Пиллӗк ҫурӑ. Шурӑмпуҫӑн
Чаршавне сирсе аран,
Уйрӑлать хӗвел, кун пуҫӗ,
Ҫӑлтӑр куҫлӑ ыйхӑран.

Улмуҫҫи тӑрри хӗрелчӗ,
Йӑлтӑр ҫиҫрӗ чӳрече.
Ах, ыр евчӗ, ах, ыр элчӗ!—
Ун алли ман пит ҫинче.

Кӑчӑр-кӑчӑр тӗпрететӗп
Кӗҫӗрхи ҫӳхе пӑра.
Ӗнчӗ мар-ши ҫакӑ, тетӗп,—
Таптамашкӑн та хӑрап.

Ушкӑн хӗр кӗтет автобус,
Шӑнкӑр кулӑ янӑрать.
Ырӑ кӑмӑл, савӑк тонус
Хӗвелпе пӗр хӑпарать.

Ӗнерхи пӑтранчӑк сӗлкӗш,
Пӗт, чуна ан варала.
Ырӑ ӗмӗтӗм, ан тӗлкӗш —
Сан ыраншӑн ҫунмалла.

Кур: ӗҫе тухать пур халӑх
Ырлӑх-пурлӑхшӑн ҫеҫ мар.
Пурӑнас-тӑк, асӑнмалӑх
Ӗҫ кӗрнекӗ хӑварар.

Паянхи хӗвеллӗ ирӗн
Ҫӳҫенӳллӗ хавасне

Мăнуксем те туйччăр пирĕн,
Хывччăр ĕмĕрлĕх асне.

Ахальтен-и, ав, пĕр хĕрĕ
Ушкăнран мана сăнать?..
Кун — хĕвеллĕ, пурнăç — чĕрĕ,
Пурнăç ăнăçлăх сунать...

Пулать хăш чух сехет —
Ĕшенчĕклĕн те ыррăн
Ăш çумăр пĕрĕхет...
Пуçтарăнман-ха вырăн.

Кăшт хирĕннĕн таçта
Тĕнче куса-тăранĕ
Сисместĕн вăхăта.
Ĕçе-пуçа та маннă.

Тĕтреллĕ куçупа
Пахчаналла пăхатăн,
Исленнĕ çулçăпа
Тем сассăр калаçатăн.

Арăмупа ачу
Сана хуллен чĕнеççĕ.
Эс, ӳкĕнĕçлĕ чун,
Калан: «Юрать, аннеçĕм»...

## КАҪАРУ ЫЙТНИ

Каҫарсам мана, савниҫӗм,—
Сан ятна сума суса,
Ман пером ҫутмарӗ ҫиҫӗм
Тантӑшсем астӑвасса.

Ёлӗкех ҫав, ӗлӗкехчӗ!
Сим сыптарнӑн сӑввӑма,
Кашнинчех пӗрер пикеччӗ —
Пур савма та савтарма.

Эсӗ ҫеҫ темле, кӗтмесӗр,
Йӑмӑхтартӑн та куҫа
Кӗрлесе тӑран кӗслесӗр
Хӑварайрӑн юрӑҫа.

Янрамарӗ хӗрӗх хӗлӗх
Ҫӑмӑл аллӑм айӗнче.
Купӑсра чӗнмерӗ чӗлӗх,
Ҫурнӑ шӑрӑх шӑхличе...

Халь сан лӑпкӑ куллуна та
Санӑн йывӑр тивӗҫне
Шутсӑр лайӑх ӑнланатӑп,
Пӑхсанах ачам ҫине.

Каҫсерен юрлатӑн юрӑ,
Ачашлатӑн ывӑла.
Ёнтӗ ман та сассӑм тухрӗ,
Хӗлӗх парӑнчӗ алла.

Килӗшӳллӗ ун янравӗ,
Килӗшӳллӗ те... ҫапах

Ӑнсӑртран-ши Ҫӗр шӑв-шавӗ
Кӗввӗме кӗрет шӑпах?

Сан ҫинчен юрлам-и, тетӗп,
Киленӳллӗ сехетре —
Ҫурӑлать снаряд, илтетӗп,
Тархасланӑн, Ҫӗр чӗтрет.

Ҫывӑрма тин ҫеҫ вырттарнӑ
Ывӑла курсан вара,
Туйӑнать мана пытаннӑн
Ҫӗр те пирӗн сӑпкара.

...Каҫарсам мана, ыр ҫыннӑм,
Эс те, Ҫӗрӗм, каҫарсам.
Аранах пӗр ҫаврӑм ҫыртӑм,
Иксӗре сума суса.

# КОМБИНАТ ХЁРЁСЕМ

Чăнах, курмассерен кăшт тĕлĕнетĕп:
Укăлчаран тин тухнă хĕрупраç
Асран ямасть тăван ялне, килне те,
Васкать комбината иркӳлĕм, каç.

Ют мар ăна станок кĕрлевĕ, шавĕ,
Пĕр кĕвĕпе тем юрлакан йĕке.
Анчах çуркуннехи ака уявĕ
Аса килет те — çăмăл пилĕке.

Ачалăх, малтанхи хаваслă туртăм,
Хура каçсем те вăрттăн калаçу...
Ку пулнă ялта чух. Паян, ак, куртăм —
Ун хулара та ырă çураçу.

Асфальт çинче ӳсмест пулин те лантăш,
Куккук сасси пулин те аякра,
Мĕн чухлĕ ун кунта хаваслă тантăш —
Ĕçлеççĕ, пурăнаççĕ пĕр çуртра!

Телей килсен, ăна пĕрле пайлаççĕ,
Килсессĕн хуйхă — пурте юнашар.
Кĕпе ĕлки те пухăнса хайлаççĕ,
Качча анчах каяççĕ уйрăмшар.

Чăнах, курмассерен кăшт тĕлĕнетĕп:
Мĕнле кĕрнеклĕ, кăмăллă вĕсем.
Калас-тăк, коммунизм ялавне те
Çипрен тĕртеççĕ çав чипер хĕрсем.

# АННЕ

Эп çамрăк чух каçса кайса юратрăм
Ялан пĕр пек илемлĕ Пурнăçа.
Манра вăл ырă туйăмсем вăратрĕ,
Мантарчĕ ӳркенӳллĕ канăçа.

Хĕр хитрине тин туйса илнĕ каччă
Пĕр ăна çеç пуççапнăн çĕр çинче,
Ĕмĕтсенче ялан эп Пурнăçпаччĕ,
Хама та курнă ун ытамĕнче.

Хаваслăччĕ, çап-çутăччĕ-çке кăмăл,
Ĕмĕтленни çитессĕн туйăнать.
Шăмшак та çăмăл, шухăшăм та — çăмăл!
Курмастăн, мĕн тата ăçтан юнать.

Йăпанăç ĕмĕре пымасть, пĕлетпĕр.
Ман çирĕмри чарусăр туртăма
Кĕçех, хĕрĕхсенчи хĕрарăм евĕр,
Пултарчĕ Пурнăç сиввĕн хытарма.

Мĕнле ун чух вăл пăхрĕ! Астăватăп,
Ман чун пек çӳçенмен пуль нихăш чун.
Юратăва та сирчĕ вăл, тава та,
Калас сăмахĕ те пулмарĕ ун.

Анчах... анчах — миçемĕш сисĕмпе-ши?—
Пăр витĕр туйрăм эп ун ăшшине.
Ăнлантăм: вăл «эп — сан аннӳ-çке» тесшĕн,
Каярахпа ĕнентĕм — чăн, Анне.

Чунăма илĕртет чи ансат,
Чи илемлĕ сăмах çаврăнăшĕ —
Курăнинччĕ унта çак сад,
Çак çăлтăрлă каçăн тарăнăшĕ;
Сисĕнинччĕ унта ик чĕрен
Сăмах тупайман юратăвĕ,
Пĕр-пĕрне тĕл пулсан каçсерен,
Куççульпе тухакан ыратăвĕ;
Йăлкăшинччĕ ман сăввăмра
Çамрăк мăшăрăн ачашлăхĕ,
Туй кĕрлевĕпе пĕр хапхаран
Кулянмасăр ăсатнă яшлăхĕ;
Ăшăтинччĕ йĕркемсене
Ман аннен вĕриех те сывлăшĕ,
Йĕпетминччĕ анчах вĕсене
Ун куççулĕ — пĕртен-пĕр ывăльшĕн;
Калаçинччĕ ман чĕлхепе
Мучисен ăслă-тăнлă ватлăхĕ —
Вĕсен çеç вăл, сăмах виçипе
Шухăша калассин ансатлăхĕ;
Пĕрлешинччĕ шур хут çинче
Тĕнче тĕсĕпе ман ĕмĕтĕм —
Çавăн чух эп çынсем хушшинче
Хама ăраскалсăр теместĕм.

Шарт! шартлатса ҫунать кăвайт.
Уҫланкă сывлăшĕ кăшт чĕрĕ.
Темскер калать, темрен кулать
Слакпуҫĕн ҫут тухъяллă хĕрĕ.

Итлетĕп эп ун сассине,
Итлетĕп шăпчăк юррине те,
Ҫăлкуҫ шарланине итлетĕп
Сăнанăҫемĕн хĕр сăнне.

Манра темле хавхаланулăх
Чăмăртанса ҫунат сарать...
Вăрман, кăвайт, ҫак хĕр, ҫак улăх —
Ҫак ҫĕр темле вăй-хал парать.

Туятăп ҫамрăк Кĕҫтенттинĕн
Чунне ҫĕкленĕ ĕмĕте.
Поэт шăпи хама та тивнĕн
Мăнаҫланатăп эпĕ те...

Кăвайт хуллен сӳнсе кĕл пулчĕ.
Сасси те хĕрĕн пăшăлти.
Кĕҫ унăн сывлăмлă тути
Мана чуптурĕ те йăл кулчĕ.

Хĕре эп пăхрăм куҫĕнчен:
Ачашлăх, хăтлăх кĕтрĕ чунăм,
Анчах та ун йăл куллинче
Сасартăк ҫиҫрĕ сивĕ ҫулăм.

Çук, хăратмарĕ вăл мана,
Ӳте кăна кăшт çӳçентерчĕ,
Утас çула, курас куна
Самантлăх малтанах систерчĕ.

Тавах, чиперĕм, сар чечек,—
Сив çулăму та, йăл куллу та
Ман чĕремре яланлăх юлтăр
Улшăнакан Поэзи пек.

Вăштăр ҫилĕ уйрăлмарĕ
Ешĕл-симĕс тураттран,
Пĕр савса ăна лăпкарĕ,
Пĕр вăтанчĕ те унран;
Уҫҫăн, ирĕклĕн те сыввăн,
Вăй хумасăр, сисмесле,
Ҫулҫăсем ҫинчи ҫут сывлăм
Кĕмĕлне ӳкермесле
Вăл хуллен-хуллен сиктерчĕ
Ун черченкĕ сăпкине,
Хумлăн-хумлăн вĕлкĕштерчĕ
Ун сенкер ҫивиттине;
Ăнланмарĕ: мĕн хăвачĕ —
Телеех-ши е шăпа —
Вĕсене сапса хăварчĕ
Минретен хаваслăхпа?
Пĕлтермерĕ никама та
Ҫак ачаш вăрттăнлăха...
Ах, ҫапла савасчĕ ман та
Пархатарлă сăмаха.



# ИККĔМĔШ ЯНĂРАВ

Ăшшăн çиле уярăлнă
[illegible]
[illegible]
[illegible]
Уçсан, [illegible]
Вăй хума [illegible]
Çулçă [illegible]
[illegible]
Вăл [illegible]
Ун [illegible]
Хурăн [illegible]
Ӳсĕмĕр [illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
Ах, сапла [illegible]
Пархатарлă [illegible]

*Минут года,*
*Будешь бродить по свету,*
*Грустную песенку эту*
*Вспомнишь тогда.*
Р.-М. Рильке

Иртӗҫ кунсем,
Иртӗҫ ҫулсем васкавлӑн...
Мӗн ун чухне эс калӑн,
Мана асилсен?

Ним те, пӗр сӑмах та.
Куҫу салхуланӗ анчах.
Шухӑшлӑн: «Астӑватӑп...
Пурччӗ пӗр ача...»

Типӗ ҫав сывлӑм.
Макӑрмӑн вӑл типнишӗн...
Макӑрӑн, хаш сывлӑн —
Ҫамрӑклӑху тарнишӗн.

Эс мар, эс мар пĕрремĕш хут мана
Кунпа çĕре йăлтах мантараканĕ.
Вăл урăххиччĕ, çук вăл халĕ, кайнă.
Курмастăп тĕлĕкре те эп ăна.

Ялан кĕтен, пĕлсех пĕтмен хăна —
Эс пурнăç тĕлĕнтермĕшĕ халь манăн.
Çурхи çеçкен е хĕтсăр çил-тăманăн,
Вăлтса та илĕртсе, илен тăна.

Ку лайăх-и, начар-и,— пĕлейместĕп.
Çапах хама эп «янавар» теместĕп,
Чăнлăхпала илемшĕн антăхса.

Ан тив, эс мар — тепри пĕрремĕш пултăр...
Анчах мĕн-ма эс çыхнă шурă тутăр
Вĕçет-çунать ĕмĕтĕм пек таса?!

Эс метеор пек çунса иртрĕн
Ман тĕксĕм пурнăç тӳпинче.
Çулсем пĕрле пымарĕç пирĕн:
Эп юлтăм, кайрăн эс инçе.

Çапах пĕрре итленĕ юрă
Яланлăх юлнăн чĕрене,
Сана эп курмасан та урăх,
Туятăп эсĕ чĕннине.

Мĕскер ку? Кăмăл йăпанни-ши?
Е ĕмĕт евĕр япала?—
Пĕлместĕп... Эс мана маннишĕн
Çапах хăвна ан айăпла.

Эс çăлтăр пулнă, тинĕс пулнă —
Пĕр уйрăм, ирĕклĕ тĕнче.
Эс вут пек çуннă, хум пек кулнă
Хăвна саван чĕресенче.

Анчах, хăвна кивçен памасăр,
Ыйтман эс парăм никамран.
Тен, çавăнпах сывпуллашмасăр
Эс кайрăн пулĕ ман çумран.

Пулин, ӳпкелешместĕп, тусăм,
Сана ăнлантăм витĕрех:
Вĕçев пек ирĕклĕ чуну сан
Ялан вĕçейтĕр ирĕкре.

Ун чух телейлĕччĕ эпир те.
Шап-шурă юрлă тĕнчере
Салхуллă пурнăç шавĕ витĕр
Çĕн сасă илтĕнчĕ пире.

Вăл, тунсăхпа туслашнă чуншăн
Илемлĕ çăлăнăç пулса,
Пĕр çав самантшăн, пĕр çав куншăн
Янрарĕ шăппăн та таса.

Кайран тăман кашти сасартăк
Шарт хуçăлчĕ те варринчен,
Аманнă кайăк пек, виç талăк
Алхасрĕ тăвăл çĕр çинче.

Анчах, çанталăк лăплансассăн,
Тепре çĕнелнĕ тĕнчере
Тек илтĕнмерĕ кĕтнĕ сасă...
Юр шăлса кайнă ик йĕре.

Сисеймерӗм — ӑҫтан эс килтӗн.
Ыйтаймарӑм — миҫе ҫулта.
Чӑр тинкертӗн те чуна илтӗн,
Сывлӑш улшӑнчӗ пек тулта.

Чеелентӗн — ӑша вӗҫтертӗн,
Вӑрттӑн пӑхрӑн куҫран, куҫран...
Мӗн ҫитертӗн эс, мӗн ӗҫтертӗн —
Ма тухмастӑн пачах пуҫран?

Мӗншӗн манӑн ачаш чӗремҫӗм,
Урӑхла хавассем кӗтсех,
Санӑн лӑпкӑ сӑнна ӗненчӗ
Пӗр сасартӑк — мӗне сиссе?

Йӑлтӑркка ӗмӗтсемччӗ-ҫке унӑн,
Илӗртетчӗ ӑна тӗтре.
Вӑл таҫти илемсемшӗн ҫуннӑ
Пурнӑҫран та санран инҫетре.

Халь сана аллунтан тытмасӑр,
Чуптумасӑр куҫусене,
Эп — телейсӗр, эп — чӗр тымарсӑр,
Эп шанмастӑп тӗтресене.

Халь шӑпа тӗлӗнсе шӑплантӑр —
Эс упратӑн ман ирӗке...
Шухӑшлатӑп — йӗрки ҫапла-тӑр,
Савӑнатӑп — аван йӗрке!

Матакра та паян илемлĕ,
Матакра та ачашлăх пур:
Юрă евĕр çемçе, хĕлхемлĕ
Тăкăнать тӳперен шур юр.

Хăрататчĕ ĕнер салхулăх,
Тунсăх тĕслĕччĕ кун — кичем!
Ак паян, шăнкăрав пек, кулă
Янăрарĕ Матак çинче.

Пикесем-и утаççĕ — акăш!
(Асăрхаççĕ-ши йĕкĕтсем?)
Куçĕпе, ав, тĕллерĕ тахăш,
Илĕртсе те чĕртсе, кĕтсе.

Ăнсăртран-ши ку пулчĕ, çук-ши?—
Пурпĕр çаврăнчĕ çамрăк пуç,
Çĕнĕ ĕмĕт çĕкленчĕ — уншăн,
Матак çăлтăрĕ, тавтапуç.

Çĕнĕлле çунатланчĕ кăмăл,
Чи телейлĕ куна шанса.
Вăл паян шурă юр пек çăмăл,
Вăл паян шурă юр пек таса.

Чăлтăр-чăлтăр ачаш хĕлхемлĕ
Тӳперен тăкăнать те юр —
Матакра ытарма çук илемлĕ,
Матакра чăн-чăн савăнăç пур.

Юна чĕртсе, хаваслăн култăн
Хура куçсен кăварĕпе.
Пĕр кунлăх тенĕччĕ те,— юлтăн
Пĕрле утмашкăн çĕрĕпе.

Мĕнех вара? Ман çутă ĕмĕт
Палларĕ ирĕк кăмăлна:
Ун йăлтăркка, хĕрÿллĕ хĕмĕ
Хускатнăччĕ тахçан чуна.

Çулсем пĕрлешрĕç те халь — куртăм:
Ялан эс пулнă чĕрере.
Чăн-чăн телей, хăватлă туртăм
Çуратнă эс — пинтен пĕрре.

Анчах пĕлместĕп-çке, чĕкеçĕм,
Мĕнле майпа, мĕнле майпа
Сан куçусем юна чĕртеççĕ
Çав кулă евĕрлĕ вăйпа?

Эп тăрăшатăп ăнланасшăн,
Эс пур — пыратăн ман çумра
Е аллупа çиле тытасшăн,
Е ху тарасшăн пек унран.

## ӲКЁНӲ. АСА КИЛНĔ ÇЕМĔ

*О как убийственно мы любим!*
Ф. Тютчев.

Халь çав çемĕ чуна тытса илчĕ...
Çурхи каç чечекри çĕмĕрт пек,
Асăма пĕр капланчĕ те килчĕ
Шăршипе, тĕсĕпе, хĕмĕпе!

Икĕ куç... Икĕ пурнăç çăлкуçĕ...
Икĕ çăлтăр çунать тĕпĕнче.
Пăхрĕ, пăхрĕ мана вăл. Мĕн курчĕ,
Мĕн шырарĕ манра темĕнччен?

Юрату-и, е лăпкă йăпанăç
Е, туймасăр ăна та кăна,
Хăй мана парнелерĕ-и шанăç,
Хăй — мана, тунсăх хуçнă çынна?

Ăнланмарăм ун чух, ăнланмарăм —
Халь пĕлетĕп пурне те аван:
Вăл калас тенине тăнламарăм,
Эп ун чух никама тăнламан.

Кăлăхах çутçанталăк пăлханчĕ,
Хуçăлсан шурă çĕмĕрт çеçки,
Анчах пурпĕр хаваслăн пуçланчĕ
Çутă савăш ĕçки те çики.

Асамат кĕперри айĕпе-ши
Тухса иртнĕ эпир леш енне? —
Пурнăç çулĕ ытла та кĕскешĕн
Кулянмарăм пачах ун чухне.

Халь ҫав ҫемӗ чуна касмӑклать те,
Туртӑнать мӗскӗн чун, пӑвӑнать...
Шур ҫеҫке... Калаҫатчӗ, кулатчӗ...
Халь мӗлки те манран пытанать.

*Опять тоску, опять любовь*
*В моей душе ты заронила.*
А. Кольцов

Каллех çав тунсăх, юрату...
Каллех эп хăр-турат пек тăлăх...
Вут евĕр чупрĕ сан яту
Ăс-пуçăмпа ӳт-пĕвĕм тăрăх.

Пурнăçланман ĕмĕтĕмсен
Тăпри çинче тăмашкăн йывăр.
Асилӳ сĕлĕхĕсем,
Тархасшăн, ан вăранăр, çыврăр!

Çук. Тăрăнчĕç тӳрех чуна.
Тĕнче тапранчĕ мана хирĕç.
Кала, чиперĕмçĕм, мана:
Çав мĕлкесем чăнах эпир-и?

Пĕлтĕр: сар уйăх çуттинче
Шур кăкăрна чуптăваканĕ,
Сана вилсе ыталаканĕ
Эпех-и, е ку — тĕлĕк çех?

«Мĕнле-ха мансăрăн?» — тесе,
Пăшăрхану куççулĕ витĕр
Ăсатаканĕ кам-ши?
Çитĕ!
Палларăм, чунăм: вăл — эсех!

...Сикет кунçулăн урхамахĕ.
Çĕр кукалет, турта хуçать.
Пулнишĕн айăплă хамах-и,
Е кăшт сана та çыпăçать?

Халь пурпĕрех. Анчах та темшĕн
Çак мĕскĕн уйăх айĕнче
Ун чухнехи хитре кунсемшĕн
Хуллен хӳхлет пек çут тĕнче.

Йĕретĕп эпĕ те — мĕн тăвăн?—
Кунсем иртет, çулсем иртет.
Шăпу халь санăн урăх, хăвăн,
Çĕн шухăш-кăмăл илĕртет.

Эп хам та малаллах пăхатăп,—
Анчах та тахăш сехетре
Килетĕн те — пуçа усатăп,
Çӳретĕп тĕксĕм инçетре.

Вара каллех эп тăлăх, тăлăх,
Каллех çак тунсăх, юрату...
Чупать чĕре талккишĕ тăрăх,
Нихçан та сӳнмесле, яту.

Пурте ытла та ансат
(Икĕ хут иккĕ—тăваттă!):
Эс — ытарма çук таса.
Эп — пытарма çук ватă.

Суккăр шăпа тараси
Хăш еннелле тайăлать-ши?
Йывăр пăхса тăрасси.
Тен, ман пăрăнмаллаччĕ.

Лăпкăн сăнатăн мана:
Чирлĕ-и ку е — катăк?..

Çук. Юрататăп кăна.
Юрататăп.

Эп ăнланмастăп çак лăпкăлăха...

Тăп-тăрă, витĕр уçă шăплăха
Ӳт-пĕвĕмпе эп ĕненместĕп темшĕн.
Санран-ши пĕр сăмах та илтейменшĕн
Хура каçа тăнлать, тăнлать хăлха?

Мĕн илтĕп? Шăнкăрав-и шăнкăравлĕ
Йĕс сассипе çурхи кунсем çинчен,
Е сӳрĕк кулă çурăм хыçĕнчен
Чĕре патне çити кĕрсе пăралĕ?

Çакна пуласлăх пытармасăр калĕ.
Эп хатĕр. Эп тăп-тăрă, сивĕ халĕ.

Тен, сивĕрех илтес сăмахсенчен...

## ФАТА-МОРГАНА

Эс манпа мар. Шухăшласа кăларнăн
Эс туйăнатăн тепĕр чух мана.

Вĕç-хĕрсĕр пушхирпе пыракана
Сасартăк çутçанталăк улталанăн,
Калатăн эс те: «санăн эпĕ, санăн»,
Ман паталла тăсатăн аллуна,
Анчах, тытма тăратăп та ăна,
Каллех эс çук, каллех таçта ăсаннă.

Камах пĕлмест: суя тăварлă. Чăн вăл.
Анчах ĕненекенĕн çулĕ çăмăл.

Сап-сарă хăйăра пĕрмай ашса,
Эп малаллах, эп малаллах пыратăп —
Пĕр ӳпĕнсе каятăп, пĕр тăратăп,
Кĕç сан патна çитес пек аташса.

Шаккать сехет, ах тур, шаккать, шаккать...
Лапка-лапка шур юр тӑкать, тӑкать...

Уҫам-ха, терӗм, пӑрлӑ кантӑка,
Пӑхам-ха, терӗм, сӗм тӑкӑрлӑка.

Хӑвна-и курӑп, терӗм, ӑнсӑртран,
Е сассуна-и илтӗп аякран.

Яр-уҫӑ кантӑк; юр йӑлт-йӑлт вӗҫет.
Юр мар-мӗн — яш сӑну йӑл-йӑл ҫиҫет.

Тухъю ҫинчи ҫап-ҫутӑ кӗмӗлсем
Яраҫҫӗ таврана пиншер хӗлхем.

Пӗр ҫаврӑнса та пӗр авкаланса,
Ташларӑн-юхрӑн эс, хавхаланса.

Шур акӑшӑн ачаш ҫуначӗ пек
Аллусемпе эс султӑн, султӑн тек.—

Пӑхмарӗ ман ҫине кӑвак куҫу.
Ӑнлантӑм: саншӑн эп пулман та ҫук...

Тӑк, шурӑ юр, тӑках лапка-лапка...
Вӗҫ, вӑхӑт, вӗҫ. Сехет, шакка, шакка...

Эп сана пӗлместӗп,
Эсӗ те — мана.
Эп пӗчченҫӗ, эс те
Хӑвпа ху кӑна.

Пӗлӗтсем юхаҫҫӗ,
Юрӑ янӑрать.
Темшӗн ирӗн-каҫӑн
Пурпӗр чун хӑрать:

Вӑрӑмах та ӗмӗр,
Суккӑрах шӑпа.
Пулӑпӑр-и эпӗр
Иккӗн пӗр шутпа?

Тӳпере ик ҫӑлтӑр,—
Калӑн, юнашар.
Юнашар-ха, чӑн та,—
Темшӗн пӗрле мар.

Тен, ҫаплах эпир те —
Икӗ ют тӗнче?..
Кам пӗрремӗш иртӗ
Чикӗ юпинчен?



# ЛИРА

I

Сехет кĕрлерĕ — ӳкрĕ лира,
Шăпланчĕç çепĕç хĕлĕхсем...
Нумай çулсем хушши каç-ирĕн
Çиçсе вылянă кĕвĕсем
Сасартăк ирĕлчĕç, саланчĕç
Паян çак çăлтăрлă каçра,
Тип чечексем — çап-çутă ванчăк!—
Йăлтăртататăйрĕç ман тавра...

Епле минретчĕ пуçăм тутлăн
Йăпатмăш лира сассинче!
Çурхи ем-ешĕл каçсенче
Юратупа е пĕр-пĕччен
Епле эп канăçсăррăн утнă,
Телей шыранă — хурлăх тупнă.
Çапах та, ирпеле тăрсан,
Каллех юрлас килетчĕ ман,
Каллех тасан çунатчĕ шанчăк,
Эп ĕненеттĕм пурнăçа.
Нушам та — вăхăтлăх нушаччĕ,
Чĕремшĕн — вăхăтлăх хуçа.
Куççуль тăкни те, савăнни те
Çӳхе, ачаш сенкерлĕх витĕр
Мана хитрен курăннăран

Нумай ыйтман эп пурнăçран;
Ялан унпа та çырлахман,
Хăратнă та ăна, юнанă,
Васканă, çапăннă, юнланнă,
Час-час айван хĕвĕшӳре
Тĕллевсĕрех çӳре-çӳре.

Шăпланчĕ лира. Ылтăн хĕлĕх

Тек янрамарӗ чӗтренсе.
Чӑн пурнӑҫпа пӗр сӑнлӑ тӗлӗк
Ҫухалчӗ урӑх килмессе.

Чӑнах вӑл: ӑс туптаннӑ тапхӑр
Эпир мӗн курнинех тытатпӑр,
Анчах та тепӗр чӑнлӑха
Алпах тытас тени — сахал...

Ак халӗ урама тухатӑп,
Утатӑп кӗмӗл ҫутӑра.
Хура тӳпе сӗмне пӑхатӑп,
Сӑнатӑп Алтӑр Ҫӑлтӑра.

Малтанхиех кунҫул йӗркийӗ,
Тӗпрен тем улшӑнни-мӗн ҫук.
Ҫапах та ун ӑшчикӗ, ҫиййӗ
Чӗремшӗн урӑх пек ку чух.
Куратӑп: сарлака ҫӗршывӑн
Кашни-пӗрех кӗтессинче —
Хуласенче те ялсенче —
Ҫӗр тӗрлӗ халӑх хӗрӗ-ывӑль
Ӗҫлет те вӗренет куллен
Ҫынсен паха йӑлипелен.
Ҫӗнет шыва та сывлӑша вӑл,
Вута пӑхӑнтарать хӑйне.
Кӗрлет ҫӗршыв — хаваслӑ, шавлӑ!
Каfive янравӗ тӗнчене...

Ӑспа вӗҫетӗп. Куҫӑм ҫивчӗ.
Малтан мала тинкернӗҫем
Каллех татти-сыпписӗр килчӗҫ
Сӑрсем, сӑнсем, ӳкерчӗксем.
Сасартӑк темиҫен пӗр харӑс
Умра ҫутална пек экран,
Вӗсем хыпарлама пуҫларӗҫ:

Ку — çывăхран, леш — аякран.
Лере пĕрин сасси, чан çапнăн,
Чĕнет кĕрешĕве тухма,
Телейлĕ куншăн юн тăкма...
Унта, ав, чĕмере тулланăн
Е сĕрĕм тивнĕ пек тӳнсе,
Кăштах сывланăн, сывламанăн
Выртаççĕ ĕмĕр ачисем,
Гашиш та героин ĕмсе...
Кĕрлет Атлантика леш енĕ.
Хура та, хăмăр та шур ал
Пĕр çутă ĕмĕте тĕлленĕ,
Пĕр вăй туртнипеле çĕкленнĕ;
Çав вăй вăл — пурнăçшăн хурал.
Шавлаççĕ, авă — Dranq nach Osten!
Доктрина кивĕ ку, çапах
Тĕлĕнмелле инçе форпост ун —
Дамански патĕнче шăпах.
Анчах... цитатникпе-и çӳрĕр,
Е юрлăр „Deutschland überall...“
Ариец-и, тепри-и фюрер —
Хăмпăланни пĕрех ахаль...

Куратăр-и, тăраççĕ сыхă
Ем-ешĕл тумлă каччăсем.
Каçас тесен те — каçасси-ха!
Тӳрех каçарĕç-ши вĕсем?..

Ах, Çĕрĕм! Çаврака та капăр!
Мĕн чухлĕ халăх сан çинче!
Мĕн чухлĕн юрласа утатпăр
Мускавсенче, Парижсенче.
Миçе çĕрте телей куççулĕ
Ӳкмест пуль кăкăру çине.
Пĕр самантра çеç каçхине
Миçе хутчен илтместĕн пулĕ

«Саватăп, чунăм...» тенине.
Мĕнле кăна ӳсентăран та
Мĕнле кăна чĕрчун тĕнчи
Эс çуратса тăрантаратăн,
«Анне» тесе калаттаратăн,
Анчах ăçти ĕмĕрсенчи
Усаллăх юлнă-ши санра?—
Пуян эс халь те усалран.
Вĕçетĕн чĕмсĕр, пушă хирĕн
Йăлтăртататан талккишĕнче,
Пачах та ăнланман пек пирĕн
Чун-хавала çак таранччен.
Ăçта вĕçетĕн? Мĕншĕн? Камшăн?
Мĕнле тухатмăш чĕннипе?
Шăпу мĕнле? Хура çăхан-ши,
Муртан виле сĕтĕрнĕ пек,
Сана çаклатнă чĕрнипе?
Е кăвакарчăн сăмсинче-и
Олив туратĕнчен таса
Çунатăн эс? Çулу инçе-и?
Чим, юрамасть-и тăхтасан?
Тăван сăпкам! Кала, тархасшăн,
Этем ăс-хакăлĕ сана
Хăш çырана илсе тухасшăн?..
Е ху эс чăрсăррăн ăна
Çапатăн хирĕç çырана?
Чĕнмерĕ Çĕр. Хура-кăваккăн
Йăмăхакан тавралăхра,
Вут-çулăм сапнă евĕр факел
Этем çĕкленĕ алăра,
Вăл кăшт чарусăррăн чĕтренчĕ,
Унтан, сасартăк хытнă пек
Хăватлă алă тытнипе,
Мухтавлăн ярăнчĕ. Хитреччĕ
Ун ирĕклĕ чуппи пăхма...
Вара асилтĕм эп хама.

II

Шăпам... чăваш шăпи вăл манăн.
Тымарăм — халăх юнĕнче.
Арçурисемлĕ сĕм вăрманăн
Упи каçман çырмисенче,
Çап-çутă кӳл хĕррисенче
Пуçланнă эпĕ, амаланнă,
Алпа хĕвел тытма хăтланнă.
Чăваш хĕрарăмĕ каçкӳлĕм
Хуллен-хуллен лăпка-лăпка
Мана çывратнă. Пултăр ӳлĕм
Раскаллă, тенĕ. Хуп сăпка
Пĕр вĕçнĕ уйăх патнелле,
Пĕр чăмнă авăр тĕпнелле.
Ирпе каллех кĕтӳç шăхличĕ
Мана вăратнă ыйхăран.
Пӳрте пĕр хĕсĕк тĕнĕ витĕр
Кун тĕсĕ сăрхăннă аран.
Çапах, тула чупса тухсассăн,
Пуçа кăшт каçăртса пăхсан,
Тĕнче тени темрен те аслăн
Тăрать пек ырлăх салатса:
Çуркуннепе — серти, пултранĕ,
Çулла çиетĕн çырлине.
Пухать утма пултараканĕ
Кăмпа та мăйăр кĕркунне.
Хĕлле тесен, ĕшне куянлă:
Юрпа хупланнă тапăра —
Сисместĕн те — сикет пуянлăх,
Айван пуçне пăра-пăра.
Çавал çинче еУнкă тăрăх,
Тытса кĕрнеклĕрех атма,
Аван вылянчăк та тăп-тăрă
Шыва çăрттаншăн шуйхатма.
Çăкалăхра хурт-хăмăр пулнă,

Улăхсенче — лаша сасси...
Епле хаваслăн утă çулнă,
Епле хитре тыр акасси!

Анчах та ĕмĕрсен сакки-ши
Сарлакарах чутланнăран
Кăмпа çитместчĕ пирĕн килшĕн,
Тăрантаймастчĕ пултăран.
Куян та — янтă какай мар-çке,
Ахальтен мар хӳри кĕске.
Пыртан пăватчĕ хырçă-марçă —
Аçа çапасчĕ йĕксĕке.
Чĕвен тăрса çыхмашкăн чӳлĕк
Çитместчĕ пӳ те — пурпĕрех
Суха тăваттăмăрччĕ, пӳлĕх
Мул хушасса кĕтсе пире.
Хушмастчĕ, хыт кукар. Яратчĕ
Пĕр хĕрхенмесĕр тĕрлĕ шар.
Сарамакпа пăчлантаратчĕ,
Саратчĕ выçлăх та пушар.
Этемĕ, выльăхĕ пĕтетчĕ.
Хăва хулли пек йăмăксем
Выртатчĕç шăтăка кĕрсе —
Çаплаччĕ пӳлĕхĕн тивлечĕ.
Тиек унтан та ирттеретчĕ:
Килетчĕ хырăм каçăртса,
Саламатпа ислеттеретчĕ —
Выртаттăмăр шăла çыртса.
Юхатчĕ юн. Хура куççулĕ
Тумлатчĕ хыт тăпра çине.
Юратнă çĕр! Тăван анне!
Эс пирĕншĕн эрленнĕ пулĕ,
Курса ĕçчен ачусене
Кунçул тылли лăсканине.

Çук, ахаль мар-тăр сар хĕвелĕ
Савать пурне те пĕр танах...

Ăçтан-ха чунăмăр кивелĕ?—
Вăл шухă, çамрăк яланах.
Хуп хушшинче усранă юрă
Çапах та юрă пулнă пек,
Çĕмĕрĕлмен вăл — шаннă тек:
Килет çĕн ĕмĕр, килетех!
Тулашĕ, ăшĕ ун — йăлт урăх...
Кĕтеттĕмĕр. Çунса тертленнĕ
Хура ана та шăрăхра
Çаплах кĕтмест пуль çумăра,
Сĕм-суккăр ĕмĕр ĕмĕрленĕ
Этем те, кун çути тесе,
Çаплах асапланмасть кĕтсе.
Кĕтеттĕмĕр... Чĕре хăвачĕ
Хуллен-хуллен пуçтарăнса
Е юрăпа вĕçсе тухатчĕ,
Е йăлтăркка куççуль пулса
Ӳкетчĕ сарăмсăр çĕре...

Анчах ырри те тĕнчере
Пиртен пĕр юлмиех тарман-тăр:
Савни тухйийĕ йăлтăр-ялтăр
Шур кĕмĕл çутă çиçтерсен,
Ĕшенчĕк тĕлĕрнĕ ял çийĕн
Шăнкрав пек янрасан сассийĕ,
Каç шăплăхне чĕтрентерсе,
Вăл пăрчăкан пек ирĕк, çăмăл
Сан умăнтан утса иртсен,
Иртӳçĕн, унăн чакăр куçĕ
Пĕр çепĕççĕн те уççăн-уççăн
Сана самантлăх тинкерсен,—
Юн пĕçерет! Хавасла кăмăл!
Манатăн пĕтĕмпех ун чух —
Тиек те, староста та çук,
Пĕр мăшăр çăлтăр куç анчах-тăр
Çунать те хăй патне туртать.

Нихҫан таса хӗлхем ан чактӑр
Ҫав икӗ йӑлтӑр ҫӑлтӑрта.

Ҫапах кӗтсе илме тӳр килчӗ —
Юратнӑ ҫӗрӗмӗр ҫинче
Епле хӑватлӑ ҫавраҫилччӗ,
Епле кисреннӗччӗ тӗнче!
Тинех ӗмӗртенхи ултавӑн
Йӑванчӗ хӑтсӑр кӗмӗркки.
Ҫунатлӑ вӑй илсе, мухтавлӑн
Пуҫланчӗ Ҫӗнӗ Кун йӗрки.
Тинех тапса сывларӗ кӑкӑр,
Сас пачӗ тӗрӗслӗх тинех.
Тинех эпир ӳстернӗ ҫӑкӑр
Каларӗ ҫӑкӑр тутиех...
Шӑп ҫавӑн чух чӑваш этемӗ
Пӗр хыпрӗ Ленин ячӗпе —
Ун йӑлтӑр ҫуламӗ-хӗлхемӗ
Ун чух вӗҫетчӗ тӗнчипе.

III

Чупса иртенваскавлӑ кунӑн
Ҫути, ӑшши эсех паян,
Мухтавлӑ Ленин. Санпалан
Планетӑмӑр шӑпийӗ, унӑн
Чун патӗнчи, шалти, таси,
Халь пулаканӗ, пуласси;
Санпа Тӑван ҫӗршывӑм манӑн,
Чӑваш ҫӗршывӗ те санпа,—
Мала пӑхса утать вӑл танлӑн
Илемлӗ те хастар сӑнпа.
Санпах ман ӗмӗтӗм-ҫунатӑм,
Ӑс-хакӑлӑм, хевте-хавас.
Тахҫантанпах ҫакна туяттӑм:
Сан ятунта пурах ман ятӑм —

Российăра пур Çавалкас.
Ĕçпе-и е вĕри сăмахăн
Пуççавăран сипечĕпе,
Чăнах та ырă евчĕ пек,
Эп çул хыватăп-и вăраххăн
Тус-пĕлĕшсен чĕрисене,
Кăштах пулин те, вĕсене
Салхуллă сăн хупăрласассăн,
Кўрет-и савăнăç ман сассăм;
Телейлĕ, лăпкă сехетре
Кĕтеççĕ-и мана хавассăн
Вĕсем тулли кĕрекере
Ытараймасăр, ĕмĕтленнĕн —
Сан аслă тивлетў ку, Ленин.
Хаяр-хатарлă, йўçĕк чунлă
Е хура юнлă çынпала
Вăрçса, шыратăп-и эп чăнлăх
Сĕм-тĕттĕмре те кăнтăрла;
Утатăп-и, ура тупанĕ
Юнăхасса малтан пĕлсе,
Сив курайманлăх çилĕсем
Вĕрсе кăларакан тăманăн
Лĕкки ăша та лекессе;
Пуçа чикетĕп-и тахшийĕн
Тилçе-суранлă пурнăçне,
Илтсе темçе те çине-çийĕн
«Камах вăл саншăн?» тенине;
Тăватăп-и тăван-пĕтен те
Тума хушманнине нихçан;
Чăтуллăн: «Хам пĕтсен пĕтем те —
Сыв пултăр тĕрĕс шухăш ман!» —
Тесе çунатăп-и, киленнĕн,
Пĕр хам чыса çеç астуса —
Сан аслă ирĕкў ку, Ленин,
Çиçет ту юрĕ пек таса.
Çулпуçăмăр, яту сан çутă,

Вăл пирĕншĕн шăпа пекех:
Тăваншăн — сывăх,
Ютшăн — ютă,
Çĕре пайлать шăпах икке.
Ан тив, барьер леш енĕ сиктĕр
Вутта пăрахнă çĕленле.
Истори палăртнийĕ çитĕ —
Хăпармĕ юшкăн çӳлелле,
Усал тухаймĕ çиеле,
Вăр варкăшан кăвак çилсемлĕ
Ăш çумăрсемлĕ, шур хĕлсемлĕ,
Этемĕн ирĕклĕ çĕрне
Тĕртеймĕ вилĕм çăварне.

Çулпуçăмăр, яту ялавăн
Çĕр пичĕ çийĕн варкăшать.
Пĕр — хулана, тепре — яла вăл
Кĕрет те çĕн хевте хушать.
Пулать вăл плуг, пулать вăл трактор,
Пулать вăл пуля, кĕнеке —
Çухалтăрах, эппин, инкек,
Хаваслăн пурăнăç сывлатăр.
Чăнах, час-час ытла та йывăр
Çак кулленхи çапăçура.
Анчах эс сывăр, лăпкăн сывăр,
Çитес кунсемшĕн ан хăра.

IV

Этем уйрăлаймасть нихçан та
Хăй пурăнан вăхăтĕнчен.
Шăп çавăн пек эп халĕ хам та
Ун теветкел ытамĕнче.
Вăл, вĕççĕр-чиксĕр уçлăх евĕр,
Тăрать мана хупăрласа,
Пĕр аслă чăнлăх та пĕртен-пĕр
Чи хаклă тивĕçлĕх пулса.
Кĕрет чуна, кĕрет ăса вăл,

Пĕрре — ачаш, тепре — синкер,
Е акатуй пек шавлă, савăк,
Е вăрçă хирĕ пек тискер.
Вăл — çеçпĕлĕн кĕрен хĕлхемĕ,
Вăл — вăрманти вучах ăшши,
Вăл — эп анчах ĕнернĕ çемĕ,
Салху калаçусен çĕклемĕ,
Вăл — пĕчĕк акăшсен ташши.
Вăл — тамăкра та, çăтмахра та
Ялан манпа, ялан пĕрле.
Эп тĕлĕксемсĕр çывăратăп,
Вăл пур çаплах, ларма хĕрле,
Куçне хупмасть, ĕçрен хăпмасть,

Кĕнчелине алран ямасть.
Авăрланать çиппи кунçулăн,
Тулать йĕки, ӳсет çăмхи.
Ах, вăхăт... чăн та, ерçӳ çук ун—
Пĕрмай ун шухăшлă çамки...
Паянхи кунăн кĕр-кĕрлевĕ
Ăна ярать-и шухăша?
Чунне çĕклет-и тыр сĕрлевĕ,
Тыр çийĕн хумханан ăрша?
Хаваслăхпа çиçет-и куçĕ
Яш халăх — каччăсем, хĕрсем —
Ĕç пĕтерсе киле пыруçăн
Илемлĕ юрă илтерсен?
Больница чӳречийĕ витĕр
Уа! тесе малтанхи сас
Вĕçсе тухсан, çунать-и пичĕ
Ачашлăхпа çулăмланса?
Е пĕчĕкскерĕн кĕлеткийĕ
Вутра кĕлленнине кура
Вĕçет ылханĕ ун вут çийĕн,
Вут-çулăм çийĕн — Çĕр тавра?

Туять, пӗлет... Вӑл тавҫӑруллӑ.
Пурне те витӗр вӑл курать.
Хӑш чух ун сӑнӗнче йӑл кулӑ,
Хӑш чух вӑл хыттӑн кӑшкӑрать.
Кашнин куҫне вӑл тинкерет те
Кӗрсе тухать кашни чуна.
Йӗрет-и Ҫӗр е ихӗрет-и —
Сисет те асӑрхать ӑна.
Пӗлет: этемӗн шухӑш пысӑк,
Анчах сӑпкамӑр хӳттинче
Нумайӑшӗ сиенлӗ, пӑсӑк —
Хальхаҫҫӑн тӗрлӗ-ха тӗнче.

Мана та пӑхрӗ вӑл. Тунмастӑп —
Кун пеккине эп астумастӑп.
Вӑл пӑхнӑҫемӗн эп хама
Туйма пуҫларӑм вӑйлӑраххӑн.
Ӑнлантӑм майӗпен, вӑраххӑн:
Ку таранччен те пурӑнма
Эп пуҫламан чӑн-чӑн этем пек...
Хӑш чух ӳсентӑран пек эпӗ:
Телейлӗ — сар хӗвел пӑхсан,
Салхуллӑ — кӗркунне ҫитсессӗн,
Е тайлӑк — кассӑн ҫил вӗрсессӗн.
Пӗрре инҫе ҫула тухсан,
Ялан мала, мала утмашкӑн,
Кашни тӗпренчӗк самантра
Тасалӑх, чӑнлӑх шырамашкӑн
Хамра та ҫывӑх таврара
Эп хӑнӑхманччӗ. Халь вара
Ахаль ирттернӗ сехетсемшӗн,
Тумасӑр юлнӑ ӗҫӗмсемшӗн
Эп ӳкӗнетӗп чӗререн
Ҫак вӑхӑт хӑй тинкернӗрен.
Паян та ҫын телейӗ, терчӗ
Ансат е кӑткӑс ӑнланма.

Ытла та кӑсӑк пӗр ӳкерчӗк
Тухать яр-уҫҫӑн ман ума:
Йӑмрасенчен те, пӗлӗтрен те,
Юмахсенчен те, ӗмӗтрен те
Сив элекрен те ҫӳлерех
Чӑваш ҫӗкленчӗ пурпӗрех.

Чӑваш вӗҫет! Хуракӑш ҫулӗ —
Тахҫан чуна тӗмсӗлтерни,
Тӗлӗксемпе сӗмлентерни —
Ак унӑн аслӑ пурнӑҫ ҫулӗ!
Вӑл, ӗмӗрхи айванлӑха,
Тӗшмӗшлӗхе, чухӑнлӑха
Истори ҫӑвине пытарнӑн,
Ӗненмелле, анчах ытарлӑн
Ҫӳлте-ҫӳлте ҫунса выртать,
Чарусӑр хӑй патне туртать.
Чӑваш вӗҫет. Чӑваш ҫунатлӑ,
Вӑл ирӗклӗ, вӑл ырӑ ятлӑ,
Пур халӑхпа та пӗртӑван.
Эп — унӑн чӗр сӗткен пек юнӗ,
Эп — унӑн ӑмӑрткайӑк чунӗ,
Эп унсӑр мӗскерех тӑвам?

Эппин, кӗрлетӗрех сехетӗм,
Пуҫлантӑр юррӑм ҫӗнӗрен.
Ман ҫепӗҫ лира пурччӗ — петӗм,
Сасси хавшак илтӗннӗрен.
Халь урӑх лира — урӑх ҫемӗ
Йӗркеленет чун тӗпӗнче.
Янравлӑ хӗлӗхсем ҫинче
Мухтасшӑн эп паян этемӗн
Сӑваплӑ, чыслӑ кунҫулне —
Ун куллине, ун куҫҫульне.

*1969 ҫ.*

# ТУПМАЛЛИ

## Тымар


Революци музейĕ . . . . . . 5
Сӳнмен тĕтĕм ҫинчен . . . . . 7
Манăҫми ачалăх . . . . . . . 9
1946 . . . . . . . . . 10
«Ун чух асаплă вăрҫăччĕ...» . . . . 11
«Ҫул вĕҫĕнчен пуҫламăшне...» . . . 13
Вăрнар чиййисем . . . . . . . 15
Тирексем . . . . . . . . . 18
Ҫĕрмĕш чечек . . . . . . . . 21
Пирĕн ăру юрри . . . . . . . 23
«Тăпран эп пулнă, йывăҫăн...» . . . . 24


## Вĕри тинĕсре


«Пуласчĕ ман вăйлă та ҫӳллĕ...» . . . . 27
«Калăр: ку, тейĕр, мода...» . . . . . 28
Август . . . . . . . . . . 29
«Ишетчĕ ман карапăм ҫăмăл...» . . . . 30
«Пулаймăп тек вунҫиччĕре...» . . . . 31
Лаша вăйĕ . . . . . . . . . 32
Апрель пуҫламăшĕ. Ир . . . . . 34
«Пулать хăш чух сехет...» . . . . . 36
Каҫару ыйтни . . . . . . . . 37
Комбинат хĕрĕсем . . . . . . 39
Анне . . . . . . . . . . 40
«Чунăма илĕртет чи ансат...» . . . . 41
«Шарт! шартлатса ҫунать кăвайт...» . . . 42
«Вăштăр ҫилĕ уйрăлмарĕ...» . . . . 44

## Иккӗмӗш янрав

«Иртӗҫ кунсем...» . . . . . . 47
«Эс мар, эс мар пӗрремӗш хут мана...» . 48
«Эс метеор пек ҫунса иртрӗн...» . . 49
«Ун чух телейлӗччӗ эпир те...» . . . 50
«Сисеймерӗм — ăҫтан эс килтӗн...» . . 51
«Матакра та паян илемлӗ...» . . . 52
«Юна чӗртсе, хаваслăн култăн...» . . . 53
Ӳкӗнӳ. Аса килнӗ ҫемӗ . . . . . . 54
«Каллех ҫав тунсăх, юрату...» . . . 56
«Пурте ытла та ансат...» . . . . . 58
«Эп ăнланмастăп ҫак лăпкăлăха...» . . 59
Фата-моргана . . . . . . . 60
«Шаккать сехет, ах тур, шаккать, шаккать...» 61
«Эп сана пӗлместӗп...» . . . . . . 62
Лира. Поэма . . . . . . 63

**Юрий АЙДАШ**

**(Юрий Григорьевич Григорьев)**

**ЛИЦА**

*Стихи и поэма*

На чувашском языке

Редактор В. И. Антипов
Художник В. Я. Агаков
Художественный редактор А. А. Макаров
Технический редактор Г. С. Самсонова
Корректор Н. П. Печникова

НТ 35039. Сдано в набор 4/VII-1975 г. Подписано к печати 16/X-1975 г. Формат 70×90/32. Бумага типографская № 1. Физ. печ. л. 2,5. Усл. печ. л. 2,92. Учетно-изд. л. 2,38. Заказ № 2703. Тираж 2 000 экз. Цена 29 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР.
Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

Цена 29 коп.